***

Шупка тĕтрепе тĕтĕм витĕр
Ман тусăм, гварди капитан
Танкĕ яла кĕрсен, кĕр те кĕр
Кĕрлерĕ ахăрса тăшман.

Хăй çулĕнчен чакать-и гварди,
Çич ют нумаййăн тĕл пулсан...
Тăвата танк унта çунтарчĕ
Ман тусăм, гварди капитан.

Ăна кун хыççăн куртăм эпĕ
Пĕр пуш пӳртре, ял хĕрринче.
Пехотăмăр ирхи тĕтре пек
Шăватчĕ пур урамсенче.

— Асран кайми çĕрсем... Ăна пĕл! —
Хире кăтартрĕ тусăм ман, —
Кунта çӳренĕ пирĕн Çеçпĕл.
Пире вăл кĕтнĕ. Вăл манман.

Вара вуларĕ Украинăн
Куçпа виçми çеçен хирне
Чун-варĕнчен юратнă çыннăн
Кăвар пекех вĕри сăввисене.

1943